**Анатолий**
**ЮМАН**

# Малтанхи вĕрентекен

**(Владимир Садай çыравçă çуралнăранпа 85 çул çитнĕ май)**

1949 çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче эпĕ, тин çеç вун çичĕ çула кайнă йĕкĕт, райхаçат çынни пулса тăтăм. Ĕç кĕнекинче çакна палăртса «секретарь ĕçне вĕренекен» тесе çырса хучĕç. Шкулта вĕренме пăрахса ĕçе кӳлĕнни – вăрçă хыççăнхи йывăр пурнăçа çăмăллатма, чирлĕ аннепе пĕртен-пĕр шăллăма пăртак та пулин усă кӳме хăтланни. Редакцие вара «çырма пĕлекен çын», хальхилле каласан, журналист кирлĕ пулнă. Эпĕ ун чухне, икĕ çул каяллах хаçатра малтанхи сăвва пичетлесе курнăскер, пĕчĕк корреспонденцисем те çырма ярăннăччĕ. Анчах та манăн «бенефист» ăнаçлă пулса тухаймарĕ. Тĕпрен илсен, пурнăç условийĕсене пула. Пĕччен вырăс карчăкĕ патĕнче хваттере вырнаçнăччĕ. Виçĕ эрне выçăллă-тутăллă тертленсе пурăннă хыççăн ирĕксĕрех хаçата пăрахма тиврĕ. Редакци ĕçне те туллин пуçăнса ĕлкĕреймерĕм. Паллах, заметкăсем çырасса çырнă ĕнтĕ, анчах икĕ полосаллă хаçатра пĕтĕм лава пĕччен тенĕ пек туртса пыма хевте çитерейменха ун чухне. Редакцие вара шăпах çавнашкал çын кирлĕ пулнă. Çавах та çак кĕске хушăра хаçат ĕçне ăнланма, профессионал куçĕпе пăхма пуçларăм. Ĕнтĕ шрифта алăпа пухса хаçат çуралнине курнăскер макет ăсталама та пуçланăччĕ, редакци çыннисем хушшинчи хăйсем çеç пĕлекен çунатлă сăмахсем те хăлхана кĕнĕччĕ: «подвал», «окно», «рубрика», «шапка» т.ыт.те.

Райцентртан вăтăр çухрăмри тăван яла варсенчи çурхи сĕлкĕше лакса лара-лара киле çуранах, иккĕмĕш кунхине анчах аран-аран çиткелесе ӳкрĕм. (Кӳршĕри Кивĕ Улхаш ялĕнче аттепе анне тусĕ пулнă вăтă учительница патĕнче çĕр каçнăччĕ.) Анне, эпĕ кĕтмен çĕртен алăк уçса кĕнине курсан, куççуль кăлармасăр та тӳсеймерĕ.

– Юрĕ, пурăнкалăпăр-ха. Кĕркунне вĕренме кайăн, – терĕ манăн «одиссейăна» итлесе пĕтернĕ хыççăн.

Çав çулхинех çу кунĕсенче эпĕ пăрахса килнĕ «Пĕрлешӳллĕ ĕç» хаçатра «Вл.Садай» ят курăнма пуçларĕ. Ячĕ ку маншăн çĕнех пулман-ха: вăрçă çулĕсенчех сайра хутра куркаланăччĕ. Заметки вĕçĕнче «Каша ялĕ» тесе çыратчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл çырни

кашни номертех тухма пуçларĕ: очерксем, сăвăсем, тĕрленчĕксем. Эпĕ редакцие ман вырăна çĕнĕ çын килнине тÿрех чухларăм. Пиçсе çитнĕ, чĕрĕ, хитре чĕлхепе çырать хăй. Кĕске тапхăртах пĕтĕм хаçат сăнĕ улшăнчĕ.

Çĕнĕ ят курăнкаланă хыççăнах эпĕ редакцирен çыру илтĕм. М.Горькийĕнни пек çаврака сас паллисемпе шупка кăвак чернилпа çырнă çак кăмăллă çыру манăн кăшт хуçăлнă чуна тепĕр хут чĕртсе ячĕ. «Владимир Садай» тесе алă пуснă. Вăл мана хаçата сăвăсемпе корреспонденцисем ярсах тăма ыйтать. Ман çинчен ăна аттепе юлташлă пулнă Михаил Иванович Нюдеев редактор каласа панă ĕнтĕ.

Эпĕ пикенсех çыратăп. Корреспонденцисем пичетленсех тăраççĕ. Çитменнине вĕсене эпĕ мĕнле çырнă çав хальлĕнех пичете ярса пырать çĕнĕ сотрудник. Çакă татах хавхалантарать. Акă сăвăсем те çурала пуçларĕç ĕнтĕ манăн. Анчах вĕсене «ахаль» сăмахсемпе мар, «урăхларах» çырмалла иккен. «Урăхларах» сăмаха Садай çине-çинех асăнать. Кашни çырура тенĕ пек. Ку енĕпе «пĕр чăваш поэчĕн» сăввинчи тĕслĕхсене илсе кăтартать. «Пĕр чăваш поэчĕ» хăех пулса тухрĕ иккен. Ку кайран, сăвви хаçатра çапăнса тухсан паллă пулчĕ. Метафорăсем, танлаштарусем, гиперболăсем тата ытти çавнашкал ăсталăх меслечĕсем пулнă ĕнтĕ çав «урăхла сăмахсем» тени.

Çакна та каласа хăвармалла, ытти нумай прозаик майлах литература ĕçне Владимир Садай та сăвăсенченех пуçланă. Унăн чи малтанхи сăвви «Пĕрлешÿллĕ ĕç» хаçатăн 1940 çулхи авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнче тухнă 77-мĕш номерĕнче пичетленнĕ. Акă вăл:

«В.Цырульников

ЮРĂ

Пит хавассăн янра, юрă,
Янра, юрă, çĕнĕлле!
Вĕçсем, юрă, çитсем, юрă,
Мускава, çут Кремĕле.

Савăнатăп: савни манăн
Вĕçнĕ Çурçĕр полюсне.
Кремĕльте те итлет Сталин
Савнин савăк юррине.

Каша».

1949-1950 çулсенче В.Садай сăввисем райхаçатра тăтăшах çапăнса пычĕç. Унăн малтанхи тапхăрта çырнă, ниçта та пичетленмен калавĕсемпе сăввисене хăй вăхăтĕнче Чĕмпĕр облаçĕнчи Димитровградра ĕçлесе пурăннă чăваш çыравçи тата журналисчĕ Яков Рогачев пухса пынăччĕ. Кайран вăл вĕсене мана парнелерĕ. Халĕ вĕсем Чăваш Республикинчи гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн архивĕнче упранаççĕ.

Пĕррехинче Садай пирĕн яла та пырса тухнă пулнă. Çум çумлакан хĕрарăмсемпе тĕл пулса калаçнă ун чух. Эпĕ унта пулман. Ытти кунсенче ĕçе сик-

термесӗр ҫӳренӗ-ха. Кун ҫинчен мана вӑл хӑй ҫырса пӗлтернӗччӗ.

Кӗркунне Вӑта Тимӗрҫенти вӑтам шкула вӗренме ҫӳреме пуҫларӑм. Унта интернатра пурӑнаттӑм. Эрнере пӗрре киле килсе каяттӑм. Ҫуран, паллах. Пӗррехинче Вӑта Тимӗрҫенти клубра В.Садай вулакансемпе тӗл пулу ирттернӗ. Ку канмалли кун пулнӑ та эпир шӑпах килсене саланнӑччӗ. Каллех унпа курнӑҫасси пулмарӗ. Ҫапла пулса тухнӑшӑн питӗ пӑшӑрханса ҫӳрерӗм кайран. Юлашкинчен ҫапах та тӗл пулма тӳр килчӗ пире.

Акӑ эпӗ редакцире. Паллануӑ пӳлӗмсем. Алӑк уҫсанах – вырӑс редакцийӗ. Унти пӗлӗшсене сывлӑх сунса чӑваш пӳлӗмне иртетӗп. Ҫап-ҫамрӑк та хитре пит-куҫлӑ каччӑ сӗтел хушшинче ҫырусем ӑшне путнӑ. Шупка хӑмӑр костюмпа, шурӑ кӗпепе. Вӑл кам килнине тӳрех чухларӗ пулас. Эпӗ те, паллах.

– Ку эпӗ – Садай пулатӑп-ха, – терӗ вӑл алла ҫемҫен чӑмӑртаса.

Алли унӑн, чӑнах та, хӗрарӑм алли пек ҫемҫе. Хӑй те, хӗр пек, вӑтанса пуҫне усать.

Калаҫма эпӗ те ӑстах мар. Майӗпен ҫавах сӑмах хӑй картне ларать. Ҫамрӑк ҫыравҫӑн «Ялав» журналта «Вӑл парӑнман» ятлӑ пысӑк калавне вуланӑччӗ-ха. Тин ҫеҫ унтах «Геройсем» ятлӑ пӗчӗк новелли ҫапӑннӑ. Хӑй калланӑ тӑрӑх кӗҫех «Акӑшкӳл» калавӗ тухмалла. Райхаҫатра вӑл «Тӗл пулу» ятпа икӗ «подвалах» йышӑннӑччӗ.

– Мана ҫулталӑкне пӗрер калав кӑларса пырсан ҫитет, – тет Садай.

Сӗтелӗ ҫинче ҫӗнӗ ал ҫыру выртать. Тӗрленчӗк. «Корейӑра» ятлӑ. Кайран вӑл та хаҫатра ҫапӑнса тухрӗ. Теми кирлӗскер. Ун чухне шӑп та шай Корея вӑрҫи хӗрсе кайнӑччӗ. Владимир Леонтьевич ҫарта вӑл тӑрӑхра пулнӑ та, вулакансене ҫырса кӑтартмалли ҫук мар ӗнтӗ унӑн.

Садай манӑн тин ҫеҫ ҫырса килнӗ пӗчӗк калава пӑхса тухрӗ. Хальччен эпӗ унашкалли ҫырса курман-ха. Ку – малтанхи опыт. Мӗн ҫинчен ҫырнине астумастӑп ӗнтӗ. Пӗр деталь пирки калани асрах.

– Акӑ эсӗ сар хӗвел тухни ҫинчен ҫыратӑн. Ирхи хӗвел сарӑ тӗслӗ мар, хӗрлӗ тӗслӗ пулать. Тата калавра интрига тени пулмалла. Вулакана систермесӗр сюжетпа ҫавӑтса пымалла та, кайран, чӑннине пӗлсен, вӑл шалт! тӗлӗнсе кайтӑр. Манӑн «Геройсем» калавра, ав, вӑл пысӑк мар пулсан та, ҫавнашкал интрига пур. Урӑхла каласан кашни илемлӗ произведенирех завязка, кульминаци тата развязка пулмалла. Санӑн калавунта вара ҫакна курма ҫук-ха.

Ку тишкерӳ хыҫҫӑн – ҫӗнӗ калаҫу.

– Чӑваш поэчӗсенчен хӑшне юратса вулатӑр? – кӑсӑкланать вӑл. Эпӗ пӗр хушӑ нимӗн калама аптратӑп. Епле уйӑрас-ха вӗсене? Пурте лайӑх маншӑн. Пӳрне хуҫлатма ваттисенчен пуҫлатӑп: Элкер, Хусанкай, Ухсай, Шавли...

– Ҫӗнӗ ят пур. Урдаш... Илтнӗ-и? Питӗ пултарулла поэт, – пулӑшать Садай мана.

– Урдаш? Ара, ăна та пĕлетĕп вĕт. Çырнисене вуланă. Чăваш поэчĕсенче хальччен пĕрне те курман-ха...

Малтанхи тĕл пулу çакăнпа вĕçленчĕ. Тепрехинче эпĕ редакцирен каллех йыхрав илтĕм. Облаçри ĕçялкорсен канашлăвне чĕнсе янă.

Канашлура эпĕ Садайпа юнашар лартăм. Вăл тепĕр Каша чăвашне – малта пыракан колхоз председательне Николай Васильевич Грушина илсе пынă хăйпе пĕрле. Тулли халăх хушшинче пĕчĕк хаçатăмăр чысне виççĕн хӳтĕлетпĕр – кунран кун ӳссе пыракан чăваш писателĕ, эпĕ – унăн çамрăк вĕренекенĕ тата районта малта пыракан хуçалăх ертӳçи, хаçат çыннисен шанчăклă тусĕ тата ялкорĕ. Манăн сăн ăнсăртран фотообъектива та лекнĕ иккен. Вăл облаçра тухса тăракан «Ульяновская правда» хаçатра çапăннă, унта мана палласа илме те пулать. Мăя эпĕ аттерен юлнă пурçăн шарф çыхнă...

Калас пулать, çакăн хыççăн райхаçатăн кашни номерĕнче тенĕ пекех манăн япаласем çапăнма пуçларĕç. Ĕнтĕ «подвала» йышăнакан очерксем те пĕçерме пуçларăм эпĕ. Ача-пăча калавĕсем пĕрин хыççăн тепри çапăнса пычĕç. Сăвăсем пирки каламăпăр та.

1951 çулта «Тăван Атăл» журналăн пĕрремĕш номерĕнче «Летчиксем» роман çапăнса тухсан пирĕн Садай яланлăхах Шупашкара куçса кайрĕ. Пăртак маларах унпа редакцире тепĕр хут тĕл пулнăччĕ. Çав хушăра вăл авланма та ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Мăшăрĕ – тăван ялĕпе кӳршĕллĕ Кунтикав хĕрĕ. Ăна Луиза Тимофеевна тесе чĕнеççĕ. Çĕнĕ çынсем тин çеç Ульяновскран таврăннă та хаваслăн кулса калаçаççĕ. Мана пиçсе çитнĕ чие çырлипе сăйлаççĕ. Телейлĕ самант!

Пирĕн çыхăну Садай Шупашкара куçса кайнă хыççăн та татăлмарĕ. Çапла вăл маншăн, çырма пуçлаканшăн, вĕрентекен вырăнĕнчех пулчĕ. Вырăссен «наставник» текен сăмах пур. Маншăн Садай чăннипех те çавнашкал çын пулса тăчĕ. «Садай шкулĕ» мана пултарулăх ĕçĕнче çĕнĕ пусăма çĕкленме пулăшрĕ. Ку вăл пуçламăш пусăм кăна пулнă пулин те, вăл мана çырас ĕçре чи кирлине туйса ăша хывма пулăшрĕ, вĕрентрĕ. Çавăнтан никĕс тĕпленчĕ темелле. Ан тив, малта çĕнĕ «шкулсем» кĕтнĕ: Сергей Есенин сăввисемпе чи малтанхи хут паллашни, Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕн, Стихван Шавлин шкулĕсем – кусем пурте манăн университетсем, çĕнĕрех пусăмсем, çӳллĕшсем. Владимир Садая яланах чунтан тав туса аса илетĕп.